Спорт хыпарĕсем

Пысăк спорт уявĕ – Муркашра

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Йĕлтĕрпе чупассинче пирĕн команда спортсменĕсем хăйсене япăх мар кăтартрĕç. Массăллă стартра тата хутăш эстафетăра Канаш район команди малти вырăна тухма пултарчĕ. Çĕнтерӳçĕсем питĕ вăйлă пулчĕç, çавăнпа та Муркашсем иккĕмĕш вырăна тухни те хытах савăнтарчĕ.

Полиатлонти спорт енĕсемпе ăмăртакансем те хăйсен чăтăмлăхĕпе тĕлĕнтерчĕç. Тупăшакансем хушшинче тĕрлĕ ӳсĕмри спортсменсем пурччĕ. Акă Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Людмила Алексеевна Михуткина, хăй 63 çулта пулин те, чылай çамрăкран ирттерчĕ. Малтан физкультура учителĕ пулса ĕçленĕскер, халĕ те юратнă ĕçне пăрахман – 3-4 классенче вĕренекенсене йĕлтĕр спортне хăнăхтаратьмĕн. Çакăн пек маттурсене кунта татах курма тӳр килчĕ.

Мала вара Вăрнарсен команди тухрĕ. Муркашсем, Республика чемпионатĕнче призлă вырăнсем йышăннăччĕ-ха, ялти спорт вăйăисенче вара çиччĕмĕшсем кăна пулчĕç.

Çемье командисене кураканcем ытти вырăнтисенчен нумайрахчĕ. Ку ăнланмалла та ĕнтĕ. «Сывлăх» ФСК хыçĕнчи пăр çинче мĕнле кăна ăмăртмарĕç пуль ашшĕ-амăшĕсемпе ачисем: шыв витрисене те çĕклесе чупрĕç, хоккей мечĕкне те хапхана кĕртрĕç, лаша та кӳлчĕç... Йĕлтĕрпе ярăнма пĕлнине те тĕрĕслерĕç. Пуринчен те правуртарахчисем Шупашкар тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчен килнĕ çемьесем пулчĕç. Муркашри Лоцмановсен çемйи ку ăмăртура 6-мĕш вырăна тухрĕ.

Шашкăлла выляканcем хăйсене спорт вăйăисен иккĕмĕш кунĕнче тĕрĕслерĕç. Ку ăмăртура Муркашсен команди виççĕмĕш пулчĕ, Шупашкар районĕ вара мала тухрĕ.

Пĕтĕмĕшле ăмăртусем хыççăн Муркашсем 3-мĕш вырăна тухрĕç. 1-мĕшпе 2-мĕш вырăнсенче – Канаш тата Шупашкар районĕсен командисем.

Тăваттăмĕш хĕллехи ялти спорт вăйăисем питĕ интереслĕ те хăвăрт иртсе кайрĕç. Муркаш çыннисен ăмăртăва курса киленмелли сахал мар пулчĕ. Çĕнтерӳçĕсем вара вăйăсем вĕçленсенех, тепĕр кунне, Ханты-Мансийск хулинче иртекен Пĕтĕм Раççейри хĕллехи ялти спорт вăйăисене хутшăнма тухса кайрĕç. Унта та спортсменсен ăнăçу пултăр.

Ăмăрту çӳллĕ шайра иртрĕ

Ю.И. Федотова асăнса ирттерекен республикăри йĕлтĕрçĕсен эстафети кăçалхипе 7-мĕш хут иртрĕ ĕнтĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх вăл Калайкасси шкулĕнче пулчĕ. Асăннă ăмăртăва шкулсен, учительсен коллективĕсен командисем, предприятисемпе организацисен ертӳçисем хутшăнчĕç.

Ăмăртура Чăваш Республикин спортпа туризм министрĕн çумĕ А.Н. Яковлев, Муркаш район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Шупашкарти Муркаш ентешлĕхĕн Канашĕн председателĕ А.И. Федотов, «Чебоксары – Интурист» пĕрлешĕвĕн ертӳçи В.И. Федотов, халăх вĕрентĕвĕн тата наука ĕçченĕсен республикăри профсоюз комитечĕн ертӳçи З.Н. Степанова, республикăри йĕлтĕр спорт федерацийĕн председателĕ А.П. Давыдов пулни те унăн пĕлтерĕшĕ пысăккине кăтартса пачĕ. Елчĕк тата Патăрьел районĕсен ентешлĕхĕсен ертӳçисем те çак чаплă ăмăртăва хапăл тусах килнĕ.

Кăçал старта икçĕре яхăн участник тухрĕ. Республикăри 7 район тата Шупашкарпа Канаш хулисен спортсменĕсем ăмăртрĕç Калайкассинче. Ăмăрту питĕ хаваслă та хĕрӳ пулчĕ. Пурин те хаклă парнесене, дипломсене тивĕçес килчĕ ĕнтĕ. Анчах кашни ăмăртурах чи вăйлисем çĕнтереççĕ. Вĕсем кăçал кил хуçисем пулчĕç. Вăтам ушкăнра та, аслă ушкăнри вĕренекенсем хушшинче те Калайкасси шкул ачисен пĕр команди пĕрремĕш вырăна, тепри виççĕмĕш вырăна тухма пултарчĕç. Çапла вара куçса çӳрекен кубок та кил хуçисенче пулчĕ.

Вăтам ушкăнра Красноармейски районĕнчи Тракри чăваш-нимĕç гимназийĕнче вĕренекенсем иккĕмĕш пулчĕç. Вĕсем хыççăн финиша Элĕкри вăтам шкул команди çитрĕ. Аслă ушкăнра иккĕмĕш вырăн каллех Элĕкри вăтам шкулăн пулчĕ.

Ачасем хăйсен финишĕ хыççăн учительсем ăмăртнине кăсăклансах сăнарĕç. Кунта Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн вăйлă командине çитекен пулмарĕ. ЧПУ преподавателĕсем иккĕмĕш пулчĕç. Канаш хулинчи 7 № шкулти вĕрентекенсем те призлă вырăн йышăнчĕç. Каламалла, çак стартра маларах республика чемпионĕ пулнă А. Кузьмин, тĕнче чемпионки пулнă Е. Савельева хутшăнни ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнне пулчĕ.

Ăмăртури VIP-чупу та хаваслă иртрĕ. Хĕрарăмсем хушшинче 1-мĕш вырăна Елена Федотова тухрĕ. Хула больницинчи стоматологи уйрăмне ертсе пыраканскер, республикăри «Йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăртусенче те призлă вырăнсем пĕрре мар йышăннă. Арçынсем хушшинче финиша Чăваш патшалăх университетĕнчи юридици пайĕн начальникĕ Сергей Тасатов пĕрремĕш çитрĕ.

Чи кĕтнĕ те пăлхануллă самант вара парнесем парса чыслани пулчĕ. Спорт курткисем, сумкисем ... – темĕн тĕрлĕ хаклă парнесем пачĕç çĕнтерӳçĕсене. Укçан парне парса та хавхалантарчĕç. Пур спортсмен та тӳлевсĕр апатланчĕ кунта. Калайкасси шкулĕ вара компьютер илме те тивĕç пулчĕ.

Е. Андреев парнисене вăйлисем çĕнсе илчĕç

Февралĕн 21-мĕшĕнче Муркашри йĕлтĕр базинче Социализмла Ĕç Геройĕн Е. Андреевăн парнисене çĕнсе илессишĕн ăмăрту иртрĕ. Вăл таçанах йăлана кĕнĕ ĕнтĕ – 1980 çултанпах иртет. Ăна пуçараканĕсем те, В.Г. Гавриловпа В.И. Вязов, кашни çулах йĕлтĕрçĕсене сăнама килеççĕ. Ку хутĕнче те вĕсем çак ырă йăлана малалла тăсма, спорта çĕнĕрен те çĕнĕ ятсем кăларма сунчĕç. Старта тухакансене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш Патшалăх канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов ăнăçусемпе пĕрлех яланах сывлăхлă, хăпартлануллă, кăмăллă пулма сĕнчĕç. Е. Андреевăн хĕрĕ Валентина Евтихеевна та хăйĕн ашшĕне сума сунса ăмăртăва пуçтарăннăшăн тав сăмахĕ каларĕ.

Çак кун, йĕлтĕрпе чупассипе Чăваш Республикин чемпионачĕ иртнĕ май, ăмăртаканcем ытти чухнехинчен кăшт сахалрах пулчĕç – 31 команда.

Кӳршĕллĕ районсенчен Горномарийскисем çеç килнĕччĕ. Вĕсем призерсем шутне кĕресси вара пĕрремĕш стартранах паллă пулчĕ. Çав тери хăвăрт чупаççĕ йĕлтĕрпе. Йĕлтĕрĕсем хăйсем каяççĕ тейĕн. Пирĕннисене те пĕртте хурламалла мар. Муркаш тата Калайкасси шкулĕсенче вĕренекенсем хастар пулчĕç. Вăтам шкулсем хушшинче малти вырăна шăпах Муркаш шкулĕ тухма пултарчĕ. Горномарийскисем – иккĕмĕшсем, Калайкассисем – виççĕмĕшсем пулчĕç. Тĕп шкулсен командисем хушшинче призерсен шутне Кашмашсем, Очăкассисем тата Шетмĕпуçсем кĕчĕç.

Ĕçлекен коллективсем те ăмăртăва лайăх хатĕрленсе килнĕ: йĕлтĕрĕсем те, вĕри чей тултарнă термосĕсем те çумрах. Çанталăкĕ сивĕччĕ çав. Анчах пите сивĕ çил чĕпĕтни ăмăртăва килнĕ йĕлтĕрçĕсен кăмăлне ним чухлĕ те хуçмарĕ. Хытăрах чупма хистерĕ çеç. Çапла ĕçлекен коллективсен командисем хушшинче пĕрремĕш вырăна «БТИ» предприяти тухма пултарчĕ. Ун хыççăн «Ударник» хуçалăх пулчĕ. Виççĕмĕш вырăна вара ăмăртăва йĕркелекенсем – Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăхра ĕçлекенсем тухрĕç.

Н. НИКОЛАЕВА.

Сăн ӳкерчĕкре: Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра ĕçлекен Андрей Мясников арçынсем хушшинче пĕрремĕш пулчĕ. Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Адлер призерĕсем – пирĕн ентешсем

Иртнĕ канмалли кунсенче Адлерта хăвăрт утас енĕпе Раççейĕн хĕллехи чемпионачĕ иртрĕ. Чăваш спортсменĕсем çак пĕлтерĕшлĕ ăмăртура медальсем сахал мар çĕнсе илнĕ. Вĕсен хушшинче пирĕн ентешсем Вера Соколова тата Петр Трофимов иккĕшĕ те хăйсен малтанхи кăтартăвĕсене лайăхлатса иккĕмĕш вырăнсене тухма пултарнă. Вера Соколова хăйĕн тантăшĕсем хушшинче пĕрремĕш пулнă. Çапла майпа вĕсем кăçалхи май уйăхĕнче Мец хулинче иртекен Европа Кубокĕнче ăмăртма путевкăсем çĕнсе илнĕ.

Ирĕклĕ майпа кĕрешме

Мартăн 6-мĕшĕнче Муркашри спорт çуртĕнче яшсем (1992-мĕш тата кĕçĕнрех çулхисем), юниорсем (1989-1991-мĕш çулхисем) тата хĕрсем (1997-мĕш çулхисем тата кĕçĕнреххисем) хушшинче тĕрлĕ виçе категорийĕсенче ирĕклĕ майпа кĕрешессипе ăмăрту иртет. 9 сехетре пуçланать. Тĕплĕнрех районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайне 63-4-65 номерпе шăнкăравласа пĕлме пултаратăр.

Хоккейла выляма чĕнеççĕ

«Сывлăх» ФСК хыçĕнчи пăр çинче **çитес шăмат кун, мартăн 7-мĕшĕнче,** районти ĕç коллективĕсен командисем хоккейла выляççĕ. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать. Кашни командăра 11 выляканпа 1 представитель пулмалла. Малти вырăна йышăннисене диплом тата куçса çӳрекен кубок парса чыслаççĕ. 2-мĕш тата 3-мĕш вырăна тухнă командăсене те, палăрнă уйрăм выляканcене те дипломсем кĕтеççĕ.

Поправка

В решении Собрания депутатов Моргаушского сельского поселения № С-22/4 от 04.02.2008 г., опубликованном в номере от 18 февраля 2009 г., по вине работников сельского поселения допущены опечатки: «04.02.2008 г.» следует читать: «04.02.2009 г.», «Н.А. Куликов» следует читать: «А.Н. Куликов».

Пĕлтерӳсем. Объявления

Куплю швейную машину «Харьков» в нерабочем состоянии или электромотор к ней. Продаю б/у электродвигатели 3-х фазные 1400 об/мин (Россия) и 1740 об/мин (Америка) в рабочем состоянии.
Тел.: 8-927-868-16-35.

Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием.
Тел.: 8-905-345-77-19. 1-6.

Утă сутатăп, çумăр курманскер.
Тел.: 66-3-50, 8-927-996-32-91, Москакасси ялĕ.
Тел.: 8-908-307-02-37, Отаркка ялĕ.

Открытым Акционерным Обществом «Мобильные ТелеСистемы» планируется проектирование, строительство, размещение и эксплуатация 17 опор воздушных линий электропередач (ВЛ) для электроснабжения металлической башни высотой 70 м. с размещением под башней контейнера аппаратной станции сотовой связи, на земельном участке расположенном в д. Верхние Олгаши Моргаушского района вдоль автомобильной дороги «Чебоксары-Ильинка».

Данная аппаратура не имеет отрицательного воздействия на окружающую среду и здоровье человека.

Представителем заказчика строительства вышеуказанного объекта является Чебоксарский филиал ОАО «Мобильные ТелеСистемы».

Настоящим администрация Моргаушского района информирует о предстоящем предоставлении земельного участка под проектирование, строительство, размещение и эксплуатацию 17 опор воздушных линий электропередач (ВЛ).

Информация по вопросу предоставления, а также по оценке воздействия данного объекта на окружающую среду можно получить по тел.: (8352)39-53-38. Свои вопросы можно также направлять в администрацию Моргаушского района в течение 30 дней со дня опубликования статьи в печати.

ЦЕМЕНТ – М-400
40 кг – 160 руб. 2-5.
«Моргаушагропромснаб»
Тел.: 8-903-346-40-58.

Продается трактор МТЗ-80 в рабочем состоянии 1981 года выпуска, трактор МТЗ-80 1985 года выпска, тележка 2ПТС-4 старого образца.
Тел. для справок: 8-927-864-31-33, 67-5-48. 2-2.

Требуются рабочие в колбасный цех. Оплата сдельная. Адрес: д. Сюрлатри. Тел.: 63-4-10, 8-927-857-96-72. 2-3.

Срочно продаю жилой дом с приусадебным хозяйством в Моргаушах. Тел.: 8-908-843-88-75. 2-2.

ИП Лукина С.М. оказывает услуги:
- оценка объектов недвижимости, земельный участков от 2000 рублей;
- юридическое сопровождение операций по оформлению прав на объекты недвижимости, земельные участки от 500 рублей.
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6 (здание администрации, 3 этаж, «Бизнес-инкубатор». Тел.: 8-927-849-61-39.
Куплю: дом, можно ветхий; земельный участок под строительство жилого дома на территории Моргаушского района. Тел.: 8-927-850-06-75.

Калайкасси ялĕнче икĕ çăм арманĕ ĕçлет. Ирхи 7 сехетрен пуçласа, кашни кӳн, кану кунĕсĕр, апрелĕн 1-мĕшĕччен.
Продаю сено луговое, тюкованное.
Тел.: 8-960-311-55-72, 65-2-33. 1-2.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 03.03.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3860.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.